# УРОЖАЙНЫЙ ГОДЪ.

# ТЫРӐ ПУЛНӐ ҪУЛ.

НА ЧУВАШСКОМЪ ЯЗЫКѢ.

КАЗАНЬ.
Центральная типографія
1911.

# Урожайный годъ.

(Тырӑ пулнӑ ҫул.)

Тикӗс шӑтнӑ тырӑсем,
Улӑхсенҗе курӑксем
Нӳрӗпе хӑват хурса
Ҫитӗнеҫҫӗ хумханса.
Йӗри-тавра пӑхатӑп,
Ытла та савӑнатӑп:
Ҫанталăк хаљ уйартса,
Хӗвел пӑхаӗ шӑратса.
Турӑ пурне те тӑваӗ:
Вӑл тӗнҗене йуратса,
Ҫумӑрӗпе шыварса
Пире савӑнӑҫ цараӗ.
Уйа пӑхсан—уй симӗс,
Паллас та ҫук—хӑй тинӗс.
Каљҗан шухӑш—ӳсесси.
Ман ӗмӗтӗм—вырасси.

Çитĕн, тыră, вăйлă пул.
Есĕ маншăн—кирлĕ мул.
Турă савса парсассăн,
Есĕ мана усратăн.
Саǝ тăрăх çил вĕрнипе,
Хăйĕн шуҫĕ-йĕркипе
Хыççăн-хыççăн хум йухаť,
Тинĕсри пек туйăнаť.
Çĕр ĕçлекен хĕресҫен
Турра пĕтĕм ҫĕререн,
Ҫунтан-вартан кĕл-тăваť.
Турă çавăншăн параť.

Вăхăт иртет, сисĕнмест.
Ĕçҫен çын канма пĕлмест.
Ҫăваш çынни туй тăваť,
Килĕшӳллĕ савăнаť.
Пăх-ха, тăван, малалла:
Çул тăрăх пĕр çын килет.
Ку çын мĕн туса çӳрет?
Йевĕҫе çӳремеç-ши?
Ҫăнах, ку çын йевĕҫĕ,
Акă пĕр киле кĕҫĕ,
Ăна-кăна калаçма
Хĕр шырама йаракан
Килнелле кĕрсе кайрĕ.
Ĕнтĕ ĕç шала кайрĕ.

Раман муҫи Иванне

Авлантарма шухăшлаŤ.
Ĕçлеме çын кирлĕ тет.
Иванăн та çул çитет.
Йевĕ̤çе çӳрекенни
Иван куккăшĕ пулаŤ.
Унăн йаṭĕ Уртеми.
Каламашкăн çăмăл-и?
Вăл Ивансен йалçсемех.
Йалĕн йаṭĕ Хурасан,
Урăх майлă каласан,
Асăнма йывăр пулаŤ.
Уртемийĕн пахṭара
Йывăç улми пит çăра.
Йывăç карти сарлака,
Хурал тытнă салтака.
Çулла пулсан пахṭара
Тĕрлĕ кайăк пурăнаŤ,
Хитре йурăсем йурлаŤ.
Шăпṭăк сасси илтĕнет,
Тăрсах итлессĕм килет.
Уртеми çуллен пуйаŤ.
Çулла пулсан пахṭинṭе
Талăкĕпех пурăнаŤ.
Йывăç улми хăй сутаŤ.
Ăна курса йал-йышсем,
Тата çывăх йаттисем
Пăртак тăн-пуç пуррисем
Улмуççисем сыпаççĕ,

Уртеми пек пулаççĕ,
Укça килтех тупаççĕ.
Йытă-пырши вырăнне
Хăна çырли йывăçне
Ӳркенмесĕр лартаççĕ.
Хĕлле ҫир-ҫĕр тапăнсан
Çырла шывĕ ĕçеççĕ,
Унтан сипĕ кураççĕ.
Çулма майсăр курăксен
Ватă тымаррисене
Тăпăлтарса пĕтерсе
Мăкăр-пуç курăк вăрри
Йетĕрнерен кӳртерсе
Çĕр çемсетсе акаççĕ,
Нумай утă тăваççĕ.
Пуху çине пухăнсан
Ухмахсене ăс парса
Хăш-ҫух çапла калаççĕ:
Пур халăхпа ăс тытар,
Тĕрлĕ путăк-шăтăка,
Ним киревсĕр сăртсене
Картасемпе çавăрар,
Йывăç лартса тултарар.
Йывăç пахҫисем пулҫҫăр,
Пыл хурҫĕсем пурăнҫҫăр,
Пире усăллă пулҫҫăр.
Уртемийĕн нӳхрепре
Саркавайпа пыл сăра,

Укçи выртаҁ тӗплӗре,
Йӑсран тунӑ арҫара.
Унӑн пуçӗ минеллӗ,
Пиҫӗ-куçӗ илемлӗ;
Итлес килет сӑмахне,
Ларас килет çывӑхне.
Йумах йараҁ йуратса,
Ӗçне тӑваҁ шӑратса.
Епир унтан вӗренмен,
Пурӑнма ӑс илеймен.

Иван ашшӗ те пуйан:
Укçи пулӗ икӗ ҫан.
Анҫах ытла хытӑран
Шӗлепки хыт сӑрантан.
Çамрӑк ҫух ӑс салатман,
Укçа шыва пӑрахман,
Хупах çулне таптаман,
Аллине ҫӗлӗм тытман.
Унӑн йатне каласан:
Иван Раманӑн аҫи,
Раман пекех пулмалла;
Раман улне йуратаҁ,
Аллантарма хӗр шыраҁ.
Есӗ хӗрна памӑн-ши,
Раман хӑти пулмӑн-ши,
Тесе ыйтса пӑхсанах—
Такам та хӗр памалла.

Асту, пёр те суймастăп,
Ҫăн сăмаха пăсмастăп.
Ёненментен кулмалла.
Йурлар халĕ малалла.
Кунтан усă пулмалла.
　　Уртемипеле Раман—
　　Йаҫĕсене ҫас ан ман—
　　Иккĕшĕ канашларĕҫ:
　　Кăҫал туй тăвас терĕҫ.
　　Ăна-кăна калаҫсан
　　Уртеми тула тухсан
　　Ивана курах кайрĕ,
　　Ним тума та пулмарĕ.
Пўртре мĕн калаҫнине
Ивана та систермен.
Ваттисем ăс тăваҫҫен
Ăна пĕлтерес темен.
　　Халĕ Ивана курса
　　Уртеми те йăпатса
　　Ҫапла кала пуҫларĕ:
　　„Халҫҫен сана пĕлтермен,
　　Авлантарас та темен;
　　Халĕ сана йуратса
　　Аван сăмах калам-и,
　　Хĕпĕртесех каймăн-и?
Аҫу-аннў ватăлҫҫĕҫ.
Тантăшусем авланҫĕҫ.
Сан та авланас пулаĭ.

Туту, аҫам, ха, кулаĭ!
Аĭа, Иван, хĕр пăхма.
Аҫу калană тăрăх
Ҫитсе килтĕм пĕр ҫĕре.

Ҫыннăн ырă суннине,
Ман сăмахăм ҫăннине
Илтсе туйĕ сан ҫĕрӳ:
Пулас-ҫĕ сан та кĕрӳ.
Есĕ кăҫал авлансан,
Йевĕҫине хам пулам.
Кăҫал туй-мĕн тумасан,
Хĕлĕпех сана хурлам.
Ĕҫлекенсĕр ĕҫ ĕнмест,
Ăна пĕр ухмах пĕлмест.
Ырă пурнăҫăн усси,
Санăн ĕмĕт курасси,
Авланмасăр курăнмасĭ.
Ҫăн сăмаха ҫын манмасĭ.
Ваттисене ҫав йураĭ,
Кам вĕсенĕн ĕмĕтне,
Ыйтмасăрах мĕнлине,
Йалан туса ҫитерет,
Пур йенҫен йӳнеҫтерет.
Аҫу-аннӳ ватăлҫĕҫ.
Ĕҫлеме те вăй сахал,
Тарҫăрсем те пит кахал.
Пиҫҫу халĕ салтакра.

Турă парсан, вăл килет.
Унҫҫен сана вăй килет.
Пăркун ака тунă ҫух
Епĕ хам кусăн куртăм,
Асушăн пит кулҫантăм.
Вăл хăй вата пусĕпе
Суха касси йĕрĕпе
Кун касаҫҫенех утаҕ,
Сĕлĕ сухине тăваҕ,
Лашине те хăвалаҕ.
Хăй те хытах ывăнаҕ.
Килте аннӳне куртăм,
Уншăн та пит хуйхăртăм,
Питĕ хытă хĕрхентĕм,
Ним калама пĕлмерĕм.
Унăн кус-сул йухаҫҫĕ,
— „Ах, ма йухмĕ кус-сулĕ“—
Хытă саспа Иванăм
Хăй куккăшне каларĕ:
„Акка та каҫҫа кайрĕ,
Пулăшакан йулмарĕ.
Анне пĕҫҫен ывăнҫĕ.
Йулташ шырас пулсассăн
Ыран касах кайăпăр,
Ҫун савнинех каласпăр.
Епĕ савни Таҕан пур:
Упа-Сырми йалĕнҫи
Салтак Петĕрĕн хĕрĕ“.

Ыран каҫа ҫитиҫҫен,
Хӗр калаҫма кайиҫҫен,
Ҫирӗм ҫулхи Иванӑн
Пуҫран шухӑш каймарӗ,
Ал ӗҫ патне пымарӗ.
Кун ӗҫсӗр иртсе кайрӗ,
Каҫ иртсе ҫӗр те пулҫӗ,
Иван ҫывӑраймарӗ.
Ир иртерех тӑҫӗ те,
Тумтирне тӑхӑнҫӗ те,
Тухрӗ, кайрӗ улӑха
Ҫӳрен лаша кукарма:
Ҫийех, лаша, курӑкне,
Ҫӗн-ҫын ларӗ сан ҫине.
Иван улӑхран килет.
Шуҫӑм ҫутӑлса килет.
Ҫуллахи ҫӗр ҫас иртет.
Шӑпҫӑк йурласа йаҫӗ,
Ун та ыйхи вӑранҫӗ.
Тӑрри тӑҫӗ тӗрлеме,
Халӑх тӑҫӗ ӗҫлеме.
Каҫпа кӗтӳ таврӑнсан,
Ҫынсем ӗҫсем пӑрахсан.
Иван лаша кӳлҫӗ те
Хӑй куккӑшне ларҭрӗ те
Тухрӗ, кайрӗ хӗр пӑхма.
Хамӑр йал хыҫа йулҫӗ.
Пӗр арҫын хирӗҫ пулҫӗ.

Шаллах, пирĕн телей пур:
Аллинҫе пĕр ҫамрăк хур.
Упа-Ҫырми инҫе мар,
Кушартан анатра мар,
Шетмĕ шывĕ хĕрринҫе.
Ҫак йал ҫырми шывĕнҫе
Таҥан шыва кĕреҫҫĕ,
Шурă ўтне ҫăваҫҫĕ.
Пасаралла кайнă ҫух
Пĕр ҫын ăна курнă тет.
Таҥан пит вăтаннă тет.
Ҫын куҫ тĕлне пулнăран
Шыва кĕме пăрахнă.

Салтак Петĕр кил-ҫурҫĕ
Катаранах кантур пек:
Йĕри-тавра йывăҫсем,
Анкартинҫе ампарсем.
Пур те ҫиме ларас ҫух
Йашка антарнă тĕле
Кĕҫĕҫ-тăҫĕҫ хăнасем.
Хăнасене тĕпелтен:
— „Ҫийес умĕн кĕлле тăр“,
Тенĕ сасă илтĕнет.
Аслă кинĕ аҫине
Йалан Турра асăнма
Ăс-ăн параҥ пулмалла.
Кăна пур те тумалла.

— „Пирĕн килес, вăй патăр“.
„Килĕрех, лайăх çынсем,
Иртĕр çакăнта мала,
Вырăн парăр, аҫасем“,
Тесе калаҫ кил-хуçи.
Шухăшласан, ĕç уççи,
Ваттисен сăмахĕпе,
Куçа хупсах курăнаҫ.
— „Çиме ларăр, хăтасем,
Çул çинҫе хырăм выçаҫ“,
Ватă Петĕр калаçаҫ.
Ҫăваш сăмахĕ тăрăх,
Хĕр-шыракан çынсене
Апат лартса çитерсен,
Çăкăр-тăвар хутăшаҫ,
Парас çук хĕр хăй цыраҫ.
Хурасанти хăтасем
Пĕр çăвартан калаççĕ:
„Ан ҫăрманăр, выçă мар,
Килтен çисе тухрăмăр;
Кунта çитсе тăтăмăр,
Апат тĕлнех пултăмăр.
Çумри телей йертнипе
Йут йалта та пур тӳпе“.
Пурне те çырийас çук:
Çиме ҫĕнсен—çиме лар,
Унсăр ĕç телейлĕ мар.
Епир малалла йурлар.

Йалан ӑспа ҫӱресен
Йалти ватӑ йатламасҫ̌.
Йевӗҭӗ ним пӗлмесен
Хӗр калаҫасси те хӗн.
Уртеми вӑл аван ҫын:
Суйи ҫук, ҭӑнни хӑйӗн,
Ҭӑн сӑмаха ҭӑн калаҫ̌,
Ӑна пур ҫын та паллаҫ̌,
Иван хӗр ҫине пӑхаҫ̌,
Ҭунӗ савӑнса тӑраҫ̌.
Уртеми йумах ҫапаҫ̌:
„Пирӗн пӑру ҫухалса...
Епир шырама тухса.
Пӑрушне уйра курса,
Анҭах тытмасӑр йулса.
Ҫамрӑк пӑру хӑраса
Ҫак йала тарса кӗрсе.
Ҫак йалта шырас тесе
Ивана лартса килсе.
Нумай ҫӗре ҫитиҭҭен
Кунта лашине кӱртсе,
Лаши кунӗ, хӑй ҫӱрен.
Сиртен пуҫне урӑх ҫук
Кунта урӑх лайӑх ҫын“...
Хӗртен йурийех ыйтаҫ̌:
„Йут пӑру курсай кунта?
Иван сана курсанах...
Ах, хӗрӗм, ан вӑтанах...

Сăмахăм йăвăш тухрĕ,
Систерекен пулмарĕ.

Иван, есĕ те калаç.
Унсăрăн ĕç ҫас пулмасť.

Таťан ашшĕ шап-шурă,
Амăшĕ те пит ырă,
Пиҫҫĕшсем пур, йăмăксем,
Тулли питлĕ инкĕшсем—
Килĕшпех аван сынсем.
Хĕр пăхмашкăн килнине
Систермесĕрех сисрĕç.
Ивана пит йуратрĕç,
Ватă карҫăк йатарса
Иван ҫумне ларҫĕ те
Акă ҫапла каларĕ:
„Ҫемҫе кăмăллă ку сын,
Мĕнле ӳснĕ сарăскер,
Салтак пекех тӳрĕскер.
Ытла та лайăх аҫа“.
Уртеми тӳрех калаť:
„Калам сана, тăхлаҫă,
Ҫăн сăмаха ҫăннипе:
Ҫак Иван—Раман аҫи,
Пуҫĕ унăн—ăс арҫи.
Пилĕкне хытă ҫыхаť,
Ăсне тирпейлĕ тытаť.

Пурӑнсан, хуҫа пулаҫ.
Халех пин тенкӗ тытаҫ.
Ашшӗ пит йуратнӑран
Авлантарма шухӑшлаҫ.
Сирӗн Таҫан лайӑхран
Хамах лартрӑм та киптӗм.
Ҫӑн сӑмахшӑн ан ҫиллен.
Петӗр Салтак хӑй пӗлет
Раман мӗнле ҫыннине.
Уртеми калаҫнӑ ҫух,
Пирӗн Иван вӑтанса
Йӑпӑш шурӗ тулалла.
Таҫан тарҫӗ пахҫана
Вӑтаннипе пытанма.
Иккӗшӗ тӗлех пулҫӗҫ,
Нумай калаҫса тӑҫӗҫ.
Аслӑ тинӗс пӗр-пӗрне
Кӑтартмасӑр усраймӗ
Витӗр тухми сӗм вӑрман
Ҫитсе курма ҫараймӗ
Иванпала Таҫана
Хире-хирӗҫ йуратни,
Пӗр йурату, пӗр кӑмӑл
Нихӑҫан уйӑрас ҫук.
Пӗрин ӑшра мӗн шухӑш,
Тепӗрин та ҫав шухӑш:
Кӑмӑл туртаҫ, ҫун саваҫ
Ҫамрӑк Таҫан Ивана

Иван пек мар вăйлăрах
Калама çук йуратаҭ:
Çутă хĕвел, çут-çăлтăр
Иван ҫухлĕ паха мар.
Çамрăк хĕршĕн çав тери
Савни ырă, пит паха.
Çакă ырă тĕнҫери
Пахасенҫен ҫи пахи:
Ҫĕрепеле ҫун савни,
Хире-хирĕç йуратни.
Иван хăйĕн шухăшне
Йĕркеллĕ каланипе
Таҭан кăмăлне килет:
„Таҭан, есĕ ман ҫунăм,
Хам ҫуна усрана пек,
Сана усрассăм килет,
Çутă хĕвел тĕнҫере
Кирек мĕнтен те çутă.
Çамрăк ăшă ҫĕремре
Çутă хĕвелтен çутти,
Çут-тĕнҫере пĕр тĕнҫе,
Таҭан, есĕ, ман ҫунăм.
Çамрăк пурăнăçăма
Ҫун тухиҫҫен пурăнма
Сан мухтавлă пурнăçпа
Пĕрлештерме кăмăл пур.
Каласа пар хаҫ ĕнтĕ
Ҫунăм кĕтсе тăнине.“

Вара илемлĕ Таťан
Ивантан именмесĕр,
Ун çине савса пăхса,
Пит ҫипер сасăпеле
Ҫун патĕнҫен каларĕ:
— „Иван, есĕ ан çилен:
Урăх сăмах хушиҫҫен,
Ман сана калассăм пур:
Есĕ мана мухтаса
„Ҫунăм“ тесе йат патăн,
Хăвăн çамрăк пурнăçна
Ман пурнăçăмпа пĕрле
Пурăнма шухăшлатăн.
Ҫăн-ҫăнах каласа пар,
Сăмахна ан улăштар:
Ҫунăпала ҫĕрӳнте
Халĕ пур ĕмĕтӳне
Нихăçан çухатмăн-и?
Ăшăмран ҫун тухиҫҫен
Йуратсах пурăнăн-и?“
— „Сана, Таťан, саватăп,
Ҫунăм çумнех хуратăл.
Ку тарана çитиҫҫен,
Санпа сăмах хушиҫҫен,
Епĕ никама пĕлмен,
Есĕ манпăн ан шиклен,
Турă кураť пĕлĕтрен:
Епĕ пĕтĕм сан умра.

Турӑ панӑ пурнӑçра
Йалан та пул ӑшӑмра“.
— „Иван, епӗ сан çинҭен
Киревсӗр сӑмах илтмен.
Малалла та шанатӑп.
Пирӗн пурӑнӑç—тинӗс.
Тинӗс урлӑ каçмашкӑн
Санпа пӗрле ларатӑп.
Турӑ панӑ кимӗпе
Еппин кайӑпӑр пӗрле.
Аҭа, кайар, ав пӳртре
Пире кӗтеççӗ пулӗ.
Пахҭа çумӗн шыв йухаҭ.
Икӗ çыннӑн ӗмӗлки
Тепӗр йенҭен курӑнаҭ.
Шетмӗ шывӗ хӗрринҭе
Хӑмӑш вӑрӑм çитӗнет.
Çил вӗрнипе хумханаҭ,
Хӗвел йӑлтӑр пӑхнӑ ҭух
Хитреленсе йӑлкӑшаҭ.
Пирӗн Иван пит ҭипер,
Улпут пекех ӑслӑскер.
Пуринпе те калаçаҭ,
Ҭӗлхи сӑмах çавӑраҭ.
Иван ҭипер пулсан та
Таҭан пекех мар ӗнтӗ.
Ку самах пит ҭӑп ӗнтӗ:
Пирӗн Таҭан пит ӑслӑ,

Хут ҫыраҡ, тӗрӗ тӑваҡ,
Пурҫӑн ҫиппи хӑй арлаҡ,
Ҫуллен катам пир тӑваҡ.
Сывӑ, лӑпкӑ пурӑнаҡ.
Таҡан аки [1]) утнӑ ҫух
Урай хӑми авӑнаҡ.
Ырӑ аҫа-пӑҫана
Турӑ сывлӑхне параҡ.
Тиркеме ҫук Таҡана:
Вӑл ҫынсенҫен вӑтанаҡ,
Улахсенҫен пӑрӑнаҡ.
Йывӑр шухӑша кайса,
Хӗр пурнӑҫне хӑй курса
Хӑш-ҫух хӑйне хӑй калаҡ:
Хӗрсен каҫҫа кайасси,
Ҫын сӑмахне илтесси
Ӑҫтан сиксе тухнӑ-ши?
Тӗнҫере мӗн ҫул хӗр пур,
Пурин каҫҫӑ шухӑш пур.
Пур те каҫҫа тухаҫҫӗ.
Халӗ мана параҫҫӗ.
Ҫынна мӗнле йурӑп-ши?
Ырӑ ҫын пек пулӑп-ши?
Варлисӗр пурӑнакан
Йӗркеллӗ каҫҫа тухсан

---

1) Акка.

Телейлĕрех пулакан.
Пĕве ҫитнĕ хĕр пултăм,
Усал сăмах сармарăм.
Турă мана пĕлмĕ-ши,
Мана телей памĕ-ши?
Ҫирĕп шухăш пуҫăмра,
Вăй-хăватăм пĕвĕмре.
Ҫынсем ĕҫлекен ĕҫе
Ĕҫлеме пултаратăп.
Туррăн ҫутă тĕнҫине
Ҫунтанах йурататăп.
Тĕнҫере мĕн пулнине
Ҫыру тăрăх пĕлетĕп.
Хампа тантăш хĕрсене
Каласа пĕлтеретĕп.
Хаҫат ҫинҫе сăмах пур:
Хĕр-арăмран улпут пур,
Улпут пекех шут шутлаĭ,
Кирек мĕнле хыпара
Аслă ҫын пек астăваĭ,
Хут ҫине ҫырса хураĭ.
Ĕмĕр хыҫҫăн ҫĕн ĕмĕр
Ҫуралса иртсе пыраĭ.
Халăх хушши улшăнаĭ:
Хĕр-арăм ҫутта тухаĭ,
Хĕр-арăмăн ҫўҫ вăрăм
Тенĕ сăмах пăҫланаĭ,
Хĕр-арăм та ăсĕпе

Арçынпала танашаҫ.
Хут вӗренсен, хӗр-аҫа,
Çав çынах, ӑсла тухаҫ.
Сӑмах малалла пыраҫ:
Таҫан çине сивӗ куç
Хаҫхи кунҫҫен те ӳкмен.
Çынсем ӑна тиркемен.
Пит илемлӗ куçӗсем
Ҫӑваш ҫирпе ҫирлемен.
Çынсем: „суккӑр вӑл“, темен.
Вырӑс хӗрӗ вӑл хӑйех.
Пит-куç майрасен пекех.
Çӳçӗ çирӑ—сарӑрах,
Çамки хӗрри кӑтрарах.

— „Кунтан ырӑ тупаймӑн.
Çак хӗре те илмесен
Ӗмӗрӗпех макӑрӑн,
Хуйхӑ пирки вилмесен
Ватӑлиҫҫен асӑнӑн.
Уртеми хӑй пуçӗнҫе
Мӑшӑлтатаҫ çул çинҫе.
Вӑл Ивана та калаҫ:
— „Таҫанӑн ашшӗ пуйан.
Епир ҫипер калаçсан,
Туйне ирттерсе йарсан,
Çине параҫ пӗр лаша,
Вiçӗ сурӑх, пӗр ӗне—

Иккӗ пăру тунине,
Виçӗ ҫаппан, пӗр тăлăп;
Аçуна çаплах калăп.
Хулăн укçи çӗр тенкӗ.
Калаçнă ҫух вун тенкӗ
Çăкăр çине хумалла.
Туй вăхăтҫен малтанах
Хулăн укçи татмалла.
Тата виççӗ килмесӗр,
Сана пӗлсех çитмесӗр,
Вӗсем хӗрне парас çук.
Ҫун савакан Таťану
Унҫҫен санăн пулас çук.
Йалти хӗрсем хушшинҫе
Ку хӗр инçе маларах:
Училищре вӗреннӗ,
Вӗренни ав катаран
Пӗтӗм паларса тăраť:
Сăн-сăпаҫӗ тасарах,
Çи-пуçӗ те шурăрах,
Пур йенҫен те тирпейлӗ,
Сăмахӗ пит илемлӗ.
Пурăннă ҫух, тăванăм,
Çыру пӗлекен арăм
Телейлӗ çын телейӗ.
Çапла Иван куккăшне
Тăват хутҫен ӗшкетрӗ,
Йулашкинҫен калаçрӗ.

Хайхи ёçкĕ май килҫĕ.
Ерехпе пĕр çын вилҫĕ.
Иван туйне тунă ҫух
Пĕр урапа çийĕнҫе
Виççĕн сиксех йурланă.
Лашасем пит хăрана:
Йамшăкĕ ытла çапнă,
Туй аҫи персе аннă,
Хăй кармуни каланă.
Лашасем каçса кайнă.
Туй аҫи вилсех кайнă...
Иван тăван туйĕнҫе
Туй халăхĕ йурларĕ:
Хурасантан туй килет,
Тĕнҫипе тĕлĕнтерет.
Пирĕн йурра йурлакан
Куракана култарман.
Çын куçĕнҫен мĕн пăхас?
Хамăр куçран пăхтарас!
Туй куракан халăха
Йурласа савăнтарар,
Килĕшӳлĕ сăмаха
Йурă йурласа калар.
Ирсĕр йурă йурласран
Ҫĕлхе-çăвара ҫарар.
Вырăнсăр мухтанасран
Пăртак ҫарăнса тăрар.
Ырă кайăк пухăнаť,

Ыpă йурра вăл йурлаť.
Усал аҫа пухăнаť,
Пур ирсĕре вăл калаť.
Ытла хытă сикекен
Ӳксе вилсе ҫĕрекен.
Йĕрипелен ҫӳрекен
Тырă вырса килекен.
Ҫумăр лайăх ҫӳрĕ-ха,
Тырă кăҫал пулĕ-ха.
Туйран киле таврăнар,
Ыран ирех ĕҫ тытар.
Ыраш вырма тапратар.
Туй халăхĕ салансан,
Тата иккĕн йурларĕҫ:
Сасă пĕтсе ҫитсессĕн
Йурлама ҫарăнтăмăр.
Йурлас килен йурлатăр,
Хăйĕн ăшне пусартăр,
Никам ăна ҫарас ҫук.
Епир тытса тăрас ҫук.
Ҫакă йурра ҫыракан
Хăйĕн йатне каламан.
Кала! тесе тапăнсан,
Тарас! тесе кăҫкăрман,
Ҫырса хунă сăмахне
Ҫынсене те пĕлтерме
Кĕнеке пек ӳкерме
Хусанти улпутсене

Тархаслама ӳркенмен.
Кĕнекесем тиркекен
Ку сăмаха тиркемен.
Хусанти улпутсене
Хамах куртăм хăш-хăшне;
Кĕрсе тухрăм савăнса,
Пурне те ырă сунса.
Çав улпутсем хушшинчĕ
Пире йуратни нумай.
Вĕсен ашшĕ Николай
Хаљ те хуçăм умĕнче
Чăваш календар çинче.
Ывăлĕсем каларĕç:
— „Мĕн пĕлнине çырса йар,
„Хупа пĕрле килнине,
„Вуласа кăтартнине,
„Кайас умĕн парса хвар.
„Çынсене те çырма хуш;
„Ырă пурăнма пулăш.
„Сан мĕне пĕлес килет,
„Чуну мĕнтен йĕрĕнет—
„Çавна та çырса пар—ха,
„Çынсене те кала-ха.
„Хаљхи çыннăн пурăнма
„Кĕнекесĕр ăс сахал.
„Анчах кĕнекесене
„Укçасăрах салатма
„Питех савăнăçлă мар.

„Укçасăр илекенсем
„Ырă кĕнекесенех
„Ђĕлĕмпе пĕтереççĕ.
„Таçтисем пире текех:
„Пире ахаљ параççĕ.
„Есир мĕншĕн укçасăр
„Кĕнекесем памастăр,
„Тесе йăлăхтараççĕ.
„Ђĕлĕм туса туртасран,
„Йе йапала ђăркасран,
„Тирпейсĕр тыткаласран
„Кам илес тейекене
„Укçалла анђах сутма
„Çак йурра кăларăпăр,
„Сана та хăвармăпăр,
„Кӳрсе панă çырушăн
„Кĕнекесем йарăпăр
Мана çапла каларĕç.
Епĕ вара Хусантах,
Киле таврăнмасăрах,
Улпутсенĕн сăмахне
Йуррăм çумне хушайрăм.
Камшăн вулама йывăр,—
Çăмăллатса çырайтăр,
Хусаналла йарайтăр.
Епĕ çырнă йуррăма
Ӳркенмесĕр вĕренĕр;
Çырса патăм сăввине,
Хăвăр тупăр кĕввине.

Т. К. К.